Василий Синицын

# ХИТРЕ ТĔРĔ

Уçă кантăк умĕнче
Пĕчĕк хĕрача ларать.
Ун хаваслă питĕнче
Хĕвел çути вăй вылять.
Питĕ тимлĕ вăл ĕçлет –
Вĕренесшĕн тĕрлеме.
Пирĕн Нина пĕчĕклех
Юрататъ çав ĕçлеме.
Юр пек шурă ал шăлли
Нина тытнă аллине.
Ретĕн-ретĕн сас палли
Ӳкерет вăл ун çине.
Пурçăн çиплĕ кĕмĕл йĕп
Пир çинче йĕрленĕçем
Тĕрри лайăх пулнипе
Йăл кулаççĕ тутисем.
Амăш панă катан пир
Пит илемлĕн курăнать.
Хаклă сăмах – «Пултăр мир!» -
Таçтанах çиçсе тăрать.

*Синицын, В. Хитре тĕрĕ : [сăвă] / В. Синицын ; А. Ыхра хатĕрленĕ // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2000. – 15 кăрлач (№ 2). – С. 6.*